26-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 20 пус

1943
ДЕКАБРЬ
10
ЭРНЕКУН
243(6480) №

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗӖ

АЛЕКСАНДРИЯ хулине тытса илессишӗн пынӑ ҫапӑҫусенче генерал-лейтенантӑн ЖАДОВӐН, танковӑй ҫарсен генерал-полковникӗн РОТМИСТРОВӐН ҫарӗсем тата авиаци генерал-лейтенанчӗн ГОРЮНОВӐН летчикӗсем чапа тухнӑ.

Уйрӑмах ҫаксем чапа тухнӑ:

ОГОРОДОВ полковникӑн 110-мӗш Гвардейски стрелковӑй дивизийӗ, БУШЕВ полковникӑн 111-мӗш стрелковӑй дивизийӗ, ЖУКОВ полковникӑн 214-мӗш Кременчугски стрелковӑй дивизийӗ, танковӑй ҫарсен генерал-майорӗн ХАСИНАН 8-мӗш механизациленӗ корпусӗ, ЮРЕВИЧ полковникӑн 116-мӗш танковӑй бригади, СОНИН полковникӑн 91-мӗш гаубицӑллӑ артиллери бригади, СТЕПАЩЕНКО полковникӑн 11-мӗш истребительнӑй противотанковӑй артиллери бригади, ЗАТУЛЬСКИЙ майорӑн 444-мӗш истребительнӑй противотанковӑй артиллери полкӗ, ГОЛЬДИН подполковникӑн 308-мӗш Гвардейски Кременчугски минометнӑй полкӗ, КОВАЛЕНКО полковникӑн 14-мӗш штурмовой инженерла-саперла бригади тата ТАРАНЕНКО полковникӑн 294-мӗш Полтавски истребительнӑй авиаци дивизийӗ.

Тунӑ ҫитӗнӗве яланлӑха палӑртса хӑварас тесе, АЛЕКСАНДРИЯ хулине ирӗке кӑларассишӗн пынӑ ҫапӑҫусенче чапа тухнӑ соединенисемпе чаҫсене „АЛЕКСАНДРИЙСКИ“ тесе ят парас.

Малашне ҫав соединенисемпе чаҫсене ҫапла чӗнмелле тӑвас:

110-мӗш Гвардейски Александрийски стрелковӑй дивизи,
111-мӗш Александрийски стрелковӑй дивизи,
214-мӗш Кременчугски-Александрийски стрелковӑй дивизи,
8-мӗш Александрийски механизациленӗ корпус,
116-мӗш Александрийски танковӑй бригада,
91-мӗш Александрийски гаубицӑллӑ артиллери бригади,
11-мӗш Александрийски истребительнӑй противотанковӑй артиллери бригади,
444-мӗш Александрийски истребительнӑй противотанковӑй артиллери полкӗ,
308-мӗш Гвардейски Кременчугски-Александрийски минометнӑй полк,
14-мӗш Александрийски штурмовой инженерла-саперла бригада,
294-мӗш Полтавски-Александрийски истребительнӑй авиаци дивизийӗ.

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзӗн Маршалӗ И. СТАЛИН,
1943-мӗш ҫулхи декабрӗн 6-мӗшӗ.

ОБОРОНА ХАЛАХ КОМИССАРӖН ПРИКАЗӖ

1943 ҫулхи декабрӗн 7-мӗшӗ. № 313. Мускав хули.

Декабрӗн 8-мӗшӗнче Хӗрлӗ Ҫарӑн М. В. Фрунзе ячӗпе тӑракан икӗ орденлӑ Ҫар Академийӗ 25 ҫул тултарать.

Граждан вӑрҫин пӗрремӗш ҫулӗнче уҫӑлнӑскер, Академи 25 ҫул хушшинче Хӗрлӗ Ҫара лайӑх хатӗрленнӗ, хальхи ҫар искусствине пӗлекен, большевиксен партийӗпе социализмлӑ Тӑван ҫӗршыва чунтан парӑнса ӗҫлекен йышлӑ кадрсем хатӗрлесе пачӗ.

Академире вӗренсе тухнӑ нумай ҫынсем—Отечественнӑй вӑрҫӑ фрончӗсенче кӗрешекен офицерсемпе генералсем—нимӗҫсен фашистла захватчикӗсене хирӗҫ пыракан кӗрешӗве пӗлсе организацилессӗ, ӑнӑҫлӑн ертсе пыраҫҫӗ.

Ҫар Академийӗ Хӗрлӗ Ҫарпа Тӑван ҫӗршыв умӗнче паха ӗҫсем тунине палӑртса, эпӗ Академин командованийӗ тата профессорӗсемпе преподавателӗсем хӑйсен пултаруллӑ ӗҫӗнче, ӗлӗкхи пекех, Хӗрлӗ Ҫара хастарлӑ та вӑрҫӑ ӗҫне пӗлекен офицерсем хатӗрлесе парассишӗн тӑрӑшса ӗҫлӗҫ, тесе шанса тӑратӑп.

Тӑшмана ҫӗнтермешкӗн Отечественнӑй вӑрҫӑн опытне пӗр чарӑнмасӑр тата тӗплӗн вӗренмелле тата ҫав опытпа ҫийӗнчех ҫарсенче усӑ курмалла. Ҫак пит паха задачӑна пурнӑҫланӑ ҫӗрте М. В. Фрунзе ячӗпе тӑракан Ҫар Академийӗ, ӗлӗкхи пекех, Хӗрлӗ Ҫарӑн вӑрҫӑллӑ-наукӑллӑ шухӑшӗсен чи пысӑк центрӗ пулса тӑмалла.

М. В. Фрунзе ячӗпе тӑракан икӗ орденлӑ Ҫар Академийӗн командованине, профессорӗсемпе преподавателӗсене тата вӗренекенӗсене Академи 25 ҫул тултарнӑ ятпа саламлатӑп тата Академие хӑйӗн пултаруллӑ ӗҫӗнче малалла та ҫитӗнӳсем тума сунатӑп.

Оборона Халӑх Комиссарӗ
Совет Союзӗн Маршалӗ
И. СТАЛИН.

Тырӑ сутакансене—промышленность таварӗсем

Государствӑна тырӑ сутакан колхозсемпе колхозницӑсем валли промышленность таварӗсем нумай уйӑрнӑ. Ҫапла, пирӗн республикӑра кӑна тырӑ сутакансем валли 50 миллион тенкӗлӗх таварсем килеҫҫӗ. Вӑл шутра, пуринчен ытла, хуҫалӑхра кирлӗ япаласем. Колхоз е колхозник государствӑна тырӑ сутнӑшӑн пӗр тенкӗ пуҫне 10 тенкӗлӗх тавар илме пултарать. Хӑшпӗр таварсене ытларах та параҫҫӗ

Потребкооперации работникӗсен паянхи хӗрӳллӗ задачи вӑл—государствӑна тырӑ сутакансем валли промышленность таварӗсене вырӑнсене тӗрӗс ҫитересси, вӗсене сутас ӗҫре большевикла йӗркелӗх тӑвасси пулать. Анчах паянхи куна ҫав тӗлӗшпе пур ҫӗрте те кирлӗ пек ӗҫлемеҫҫӗ-ха. Чӑвашсоюз нумай тӗрлӗ таварсене республикӑна илсе килнӗ. Анчах хӑшпӗр райпотребсоюзсем ҫав таварсене вырӑнсене ҫийӗнчех илсе каймаҫҫӗ. Калинино райпотребсоюзӗ ку таранччен те Канашри базӑран супӑнь тата ытти хӑшпӗр таварсене илсе кайман. Вӑрнар, Комсомольски, Пӑрачкав тата Первомайски районсем те тивӗҫлипе ӗҫлемеҫҫӗ. Унтан та ытларах, Красноармейски райпотребсоюз руководителӗсем вырӑнта пур таварсене сутас ӗҫе начар организациленӗ

Чылай ҫӗрте лавкасенче ӗҫлекенсем таварсем мӗн чухлӗ памалли йӗркесене тӗплӗн пӗлмеҫҫӗ, колхозниксене мӗнле таварсем илсе килни ҫинчен тата илсе килесси ҫинчен пӗлтерсе тӑмаҫҫӗ. Кун пек сӳрӗклӗх пулмалла мар. Государствӑна тырӑ сутакан колхозниксем хӑйсене кирлӗ таварсене вӑхӑтра тата кирлӗ таранах илме пултарччӑр

Г. ЛИЗУНОВ.

Ҫӗнтерӳ ҫывӑх ӗнтӗ, анчах ӑна алла ҫавӑрса илес тесен, пӗтӗм тыл ҫӗнӗрен ытларах вӑй хурса ӗҫлени кирлӗ

Государство валли тырӑ сутӑн илес ӗҫе ӑнӑҫлӑ пурнӑҫланӑ тата государствӑна сутнӑ тырра хатӗрлев пункчӗсене вӑхӑтра леҫсе панӑ ҫак районсемпе колхозсене республикӑри Хисеп хӑми ҫине кӗртнӗ:

25. **Йӗпреҫ районӗ** (ВКП(б) райкомӗн секретарӗ **Ф. Артемьев** юлташ, райсовет исполкомӗн председателӗ **И. Алексеев** юлташ).

26. Калинино районӗнчи **«Трактор» колхоз** (председателӗ **Журавлев** юлташ, комсомол организацийӗн секретарӗ **Васильев** юлташ). Вӑл государствӑна 6.135 пӑт тырӑ сутса, ӑна хатӗрлев пунктне леҫсе панӑ. Колхоз членӗсем хӑйсен тыррисенчен государствӑна 2.625 пӑт сутнӑ.

27. Калинино районӗнчи **Калинин ячӗпе тӑракан колхоз** (колхоз председателӗ **Владимиров** юлташ). Вӑл государствӑна 3.618 пӑт тырӑ сутса, ӑна хатӗрлев пунктне леҫсе панӑ. Ҫав шутран 1.774 пӑтне колхозниксем хӑйсен тыррисенчен сутнӑ

28. Калинино районӗнчи **«Клевер» колхоз** (колхоз председателӗ **Васильев** юлташ, комсомол организацийӗн секретарӗ **И. Васильев** юлташ). Вӑл государствӑна 4.500 пӑт тырӑ сутса, пӗтӗмпех хатӗрлев пунктне леҫсе панӑ. Ҫав шутран 1.198 пӑтне колхозниксем хӑйсен тыррисенчен сутнӑ.

Конференции декларацийӗсемпе паллашнӑ хыҫҫӑн

КУКЕҪ, декабрӗн 9-мӗшӗ. **(Телефонпа).** Районри ӗҫҫыннисем виҫӗ державӑн руководителӗсен конференцийӗ йышӑннӑ декларацисене тулли кӑмӑлпа ырлаҫҫӗ. Ҫӗнтерӳ ҫывӑх ӗнтӗ, анчах та ӑна алла ҫавӑрса илес тесен, пирӗн Хӗрлӗ Ҫара куллен ытларах пулӑшса тӑмалла. Эпир ҫав пулӑшӑва пама яланах хатӗр,—тесе пӗлтереҫҫӗ колхозниксемпе колхозницӑсем митингсемпе пухусенче. Нумай колхозсем тата колхозниксемпе колхозницӑсем государствӑна хушса тырӑ сутаҫҫӗ.

«Красный флот» колхоз членӗсем конференции декларацийӗсемпе паллашнӑ хыҫҫӑн государствӑна тата 3.000 пӑт ытла тырӑ сутма пулчӗҫ. Вӗсем малтан 75 тонна тырӑ сутнӑ. Ҫавӑн пекех «Осоавиахим» колхоз членӗсем тата 300 пӑт тырӑ сутрӗҫ. Государствӑна хушса тырӑ сутакансен хисепӗ кунсеренех ӳссе пырать.

В. КАРАУШЕВ.

Историллӗ решенисем колхозниксене хавхалантарчӗҫ

ИШЛЕЙ, декабрӗн 9-мӗшӗ. **(Телефонпа).** Колхозниксемпе колхозницӑсем Тегеранра виҫӗ аслӑ держава йышӑннӑ историллӗ решенисене хавасланса вуласҫӗ, вӗсене ырлаҫҫӗ, агитаторсене ҫав решенисене тӗплӗнрех ӑнлантарса пама ыйтаҫҫӗ.

Колхозниксемпе колхозницӑсем Тӑван ҫӗршыва тата ытларах тӗреклетес шухӑшпа хӑйсем умӗнче тӑракан задачӑсене тӗплӗ пурнӑҫласа пыма сӑмах параҫҫӗ. Районри 55 колхоз государствӑна сутнӑ тырра хатӗрлев пункчӗсене турттарса пӗтерчӗҫ. Ытти колхозсенче те ҫак ӗҫ нумай хӑвӑртланчӗ.

Шурча ялсоветӗнчи колхозсем паян хатӗрлев пунктне 42 лавлӑ хӗрлӗ обозпа тырӑ леҫме кайрӗҫ. «Коммунист» колхоз членӗсем, государствӑна 2.745 пӑт тырӑ сутса, ӑна ҫийӗнчех хатӗрлев пунктне леҫсе пачӗҫ. Халӗ колхоз государствӑна ҫӗрулми сутма пуҫларӗ. К. Федоров государствӑна 12 пӑт, Н. Иванова, Т. Семенова колхозницӑсем 6-шар пӑт ҫӗрулми сутрӗҫ. Пӗтӗмӗшпе илсен, «Коммунист» колхоз членӗсем государствӑна 150 пӑт ҫӗрулми сутаҫҫӗ.

«Красные Яуши» колхоз государствӑна 2.660 пӑт тырӑ сутрӗ. Ҫав тырра вӗсем хатӗрлев пунктне декабрӗн 5-мӗшӗ тӗлне турттарса пачӗҫ. Колхозниксем халь, Тегеранри конференци йышӑннӑ историллӗ решенисемпе хавхаланса, килес ҫул татах вӑйлӑ тырпул туса илме пулса, ҫуракине хӗрӳллӗн хатӗрленме тытӑнчӗҫ. Акма кирлӗ пӗтӗм вӑрлӑха тӗплӗн сортланӑ. Халӗ тислӗк нумайрах пухма тӑрӑшаҫҫӗ, агротехникӑна вӗренеҫҫӗ, ялхуҫалӑх машинисене юсаҫҫӗ.

«Тимӗр Ҫырма» колхоз, уя 1.200 лав тислӗк кӑларса, ӑна тирпейлӗн пысӑк купасем туса хучӗ. Вырӑнти удобренисем нумайрах пухса хатӗрлес ӗҫпе ялти ҫамрӑксемпе пӗрле шкул ачисем те хӗрсе ӗҫлеҫҫӗ

В. ГУСЬКОВ.

Ҫӗнӗ вӑй-хӑватпа

КАНАШ, декабрӗн 9-мӗшӗ. **(Телефонпа).** Районри пур колхозсенче те союзлӑ виҫӗ держава руководителӗсен Тегеранра пулса иртнӗ конференцийӗн историллӗ решенине сӳтсе-явас майпа пухусем пулса иртеҫҫӗ. ВКП(б) райкомӗ колхозниксемпе колхозницӑсене ҫак историллӗ решение ӑнлантарса пама колхозсене партипе совет активӗнчен 31 ҫын кӑларса ячӗ. Районри колхоз членӗсем, виҫӗ аслӑ державӑн историллӗ решенийӗсене ӑнлантарса панӑ хыҫҫӑн, государствӑна сутнӑ тырра хатӗрлев пунктне леҫес ӗҫе хӑвӑртлатма тытӑнчӗҫ. Паян 18 колхоз сутнӑ тырра хатӗрлев пунктне леҫсе пӗтерчӗ. Районӗпе паянхи куна государствӑна—113 пин пӑт тырӑ сутнӑ, хатӗрлев пунктне 84.654 пӑт леҫнӗ.

Государствӑна сутнӑ тырра хатӗрлев пунктне леҫес ӗҫ икӗ кун хушшинче уйрӑмӑнах ӳсрӗ. «Мотор», «Красное пламя» тата Киров ячӗпе тӑракан колхозсем хатӗрлев пунктне икӗ хут ытларах лавсем ячӗҫ.

— Союзлӑ виҫӗ аслӑ державӑн историллӗ решенийӗ ҫӗнтерӳ кунӗ ҫывхарассине пире татах та ытларах ҫирӗплетсе парать. Эпир, колхозниксемпе колхозницӑсем, фронтпа ҫӗршыва мӗнпур вӑйран пулӑшса тӑма пулатпӑр,—теҫҫӗ районри колхозниксемпе колхозницӑсем.

А. ДОЛГОВ,
ВКП(б) райкомӗн секретарӗ.

Комсомолецсем тырӑ леҫме транспорт бригади тунӑ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. **(Телефонпа).** Районри хӑшпӗр комсомол организацийӗсем государствӑна тырӑ сутас ӗҫре лайӑх тӗслӗхсем кӑтартаҫҫӗ. Красноармейски МТС-ри трактор бригадисен бригадирӗсем Я. Белов, А. Павлов, Е. Иванова, К. Владимиров 26-шар пӑт, тракторист В. Егоров—20 пӑт, С. Арсентьев—18 пӑт, В. Николаев, С. Иванова—14-шар пӑт сутрӗҫ.

„Красное Сормово“ колхозра государствӑна сутнӑ тырра хӑвӑртрах хатӗрлев пунктне леҫес тӗлӗшпе фронтовой транспорт бригади ӗҫлет. Ӑна комсомолец В. Николаев юлташ ертсе пырать. Унта 11 комсомолец ӗҫлет. Бригада ҫак кунсенче 1.000 пӑт ытла тырра хӗрлӗ обозсемпе хатӗрлев пунктне леҫрӗ.

Н. СКВОРЦОВ,
ВЛКСМ райкомӗн секретарӗ.

ЕГОРОВ КОЛХОЗНИК ПАТРИОТЛА ӖҪ ТУРӖ

СЕНТЕР, декабрӗн 7-мӗшӗ. **(Телефонпа).** Жданов ячӗпе тӑракан колхозри чи ватӑ колхозник Иван Егорович Егоров юлташ (вӑл 73 ҫулта) государствӑна 55 пӑт тырӑ сутрӗ. Государствӑна тырӑ сутас ыйтӑва сӳтсе-явнӑ чухне пухура Иван Егорович ҫапла каларӗ:

— Хам ӗҫлесе илнӗ тырра государствӑна сутса, эпӗ Хӗрлӗ Ҫара, нимӗҫ захватчикӗсене хирӗҫ паттӑррӑн ҫапӑҫакан хамӑн ывӑлӑмсене пулӑшатӑп,—терӗ.

Егоров юлташӑн икӗ ывӑлӗ тата ывӑлӗн ывӑлӗ Хӗрлӗ Ҫар ретӗнче. Хӑй вӑл 1943-мӗш ялхуҫалӑх ҫулӗнче колхозра ырми-канми ӗҫлерӗ.

М. ИСАЕВ.

Ҫӗнтерӳ кунне ҫывхартакан решени

Ҫак кунсенче республика столицинчи предприятисемпе учрежденисенче союзлӑ виҫӗ державӑн—Совет Союзӗн, Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсен тата Великобританин руководителӗсен Тегеранри конференцийӗн историллӗ решенине сӳтсе-явас майпа нумай ҫынлӑ митингсем пулса иртрӗҫ.

Ҫӗвӗ ҫелекен «Вышивка» артель коллективӗ, Тегеранри конференции историллӗ решенийӗсене сӳтсе-явнӑ хыҫҫӑн, ӗҫ тухӑҫлӑхне татах та ытларах ӳстерме пулса, хӑй ҫине конкретнӑй обязательствӑсем илчӗ.

— Виҫӗ державӑн решенийӗ ҫӗнтерӳ тумалли майсене палӑртнӑ. Пӗр шухӑш-кӑмӑллӑ, хӑватлӑ виҫӗ держава пӗрле ӗҫлесе часах тӑшмана аркатса тӑкӗҫ. Эпир, тылра ӗҫлекенсем, ҫӗршывпа фронтшӑн татах та тухӑҫлӑрах ӗҫлеме тивӗҫлӗ ӗнтӗ, — тет артель правленийӗн председателӗ А. Егорова юлташ.

«Вышивка» артель 1943 ҫулхи ӗҫ программине октябрӗн 1-мӗшӗ тӗлнех тултарнӑ. Унтанпа вӑл планран ирттерсе темиҫе пин тенкӗлӗх продукци туса кӑларнӑ. Паллӑ стахановкӑсем Карамышева, Молодова, Лебедева, Бронникова юлташсем уйӑхри плана тӑтӑшах 250—300 процент тултараҫҫӗ.

Артель коллективӗ халӗ ҫӗнӗ ҫулччен 1944 ҫулхи программӑна 30—40 процент пурнӑҫлассишӗн кӗрешет.

Ҫавӑн пекех Ленин ячӗпе тӑракан фабрика коллективӗ те Тегеранри конференции решенийӗсене чӗререн ырласа, фронтпа ҫӗршыва татах та ытларах продукци туса пама пулчӗ. Столярова юлташ ертсе пыракан цехра ӗҫлекенсем Хрисанова, Маркелова, Петрова юлташсем кулленхи задание 300 процентран кая мар тултарса пыма пулчӗҫ. Горбунова юлташ ертсе пыракан цех коллективӗ те декабрь уйӑхӗнчи задание 250 процент тултарма пулчӗ.

Рабочисемпе работницӑсен ӗҫлес хастарлӑхӗ нихӑҫанхинчен те пысӑк.

— Ҫӗнтерӳ сехечӗ ҫитесси инҫе юлмарӗ. Ҫак виҫӗ хӑватлӑ державӑн решенийӗ ҫӗнтерӳ часах пуласса шантарать, — теҫҫӗ вӗсем

Ф. МАЛЫШКИН.

Планран ирттерсе продукци кӑлараҫҫӗ

ҪЕМӖРЛЕ. Хулари предприятисенче хуҫалӑх ҫулне ӑнӑҫлӑн вӗҫлессишӗн кӗрешӳ вӑйлансах пырать. Чылай предприятисемпе артельсен коллективӗсем кӑҫалхи производство планне срокчен тултарчӗҫ. Ҫапла апат-ҫимӗҫ комбиначӗ ҫулталӑкри плана декабрӗн 1-мӗшӗ тӗлне 103,4 процент тултарнӑ. Комбинатри рабочисем халӗ нумайӗшӗсем ӗҫ нормине 150 процент ытла тултараҫҫӗ. Вӗсем ҫулталӑк вӗҫлениччен планран ирттерсе 50.000 тенкӗлӗх продукци кӑларма пулнӑ.

Ҫулталӑкри плана «Красный Октябрь» артель коллективӗ те тултарса ҫитерчӗ. Вал планран ирттерсе 35.000 тенкӗлӗх продукци туса кӑларма сӑмах панӑ. Стахановецсем Мисник, Орешников, Ожгихин, Кузнецов т. ыт. чылай юлташсем кашниех нормӑна куллен 150-шар процент тултараҫҫӗ. «Индпошив» артель коллективӗ ҫулталӑкри плана тултарнӑ хыҫҫӑн планран ирттерсе 10.000 тенкӗлӗх продукци пама пулнӑ. Хӑйӗн сӑмахне вӑл ӑнӑҫлӑн пурнӑҫа кӗртсе пырать.

Механизацийлӗнӗ арман, районри типографи те хӑйсен ҫулталӑкри планӗсене ирттерсе тултарнӑ.

К. ДМИТРИЕВ.

ТРАКТОРСЕНЕ ЮСАМАЛЛИ 4-МӖШ КВАРТАЛ ПЛАННЕ ТУЛТАРНӐ

ВӐРНАР, декабрӗн 9-мӗшӗ. **(Телефонпа).** Паян пирӗн МТС коллективӗ тракторсем юсамалли 4-мӗш кварталти плана ытлашшипех тултарса ҫитерчӗ. Ку ӗҫре уйрӑмӑнах парторг Мишаков тата Байдеряков юлташсем ертсе пыракан бригадӑсем палӑрчӗҫ. Мишаков юлташ бригади тракторсене юсамалли плана пӗтӗмпех пурнӑҫа кӗртнӗ, халӗ ытти машинӑсене юсанӑ ҫӗрте ӗҫлет. Байдеряков юлташ бригади те унтан кая юлмасть.

Декабрӗн 7-мӗшӗнче МТС работникӗсем союзлӑ виҫӗ держава руководителӗсен Тегеранри конференцийӗ йышӑннӑ решенисене радио тӑрӑх итлерӗҫ. Вӑл декларацисене пурте тулли кӑмӑлпа ырлаҫҫӗ. МТС работникӗсем Хӗрлӗ Ҫара ытларах пулӑшас тӗллевпа тракторсене юсамалли плана Хӗрлӗ Ҫар кунӗ тӗлне пӗтӗмпех пурнӑҫа кӗртсе ҫитерме сӑмах пачӗҫ. Ҫакна пурнӑҫа кӗртессишӗн бригадӑсем пӗр-пӗринпе социализмлӑ ӑмӑртӑва тухрӗҫ.

МТС коллективӗ государствӑна тырӑ сутас плана та ирттерсе тултарчӗ. Вӑл пӗтӗмпе 23.400 пӑт тырӑ сутрӗ.

Ф. НИКОНОВ,
МТС директорӗ.

Совет Информаци Бюровӗнчен

ДЕКАБРӖН 7-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐЙ СВОДКА

Декабрӗн 7-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем КРЕМЕЧУГ хулинчен хӗвеланӑҫнерехре тата кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехре, тӑшман хирӗҫ тӑнине ҫӗнтере-ҫӗнтере тата унӑн контратакисене сире-сире ярса, нимӗҫсен оборонине вӑйлӑ ҫирӗплетнӗ КЛОЧКОВО, МАЛАЯ АНДРУСОВКА, АНДРУСОВКА, ЯРЕМОВКА, ВАСИЛЬЕВКА, ГРИГОРЬЕВКА, ГЛИНСК, АРСЕНЬЕВА, ВЕРШАЦ, ШАМОВКА, ВАСОВКА, МАРТО-ИВАНОВКА, СЕМЕНОВКА, ИВАНОВКА, ДУБАВЫЙ ятлӑ пункчӗсене тата ПАНТАЕВКА ятлӑ чугун ҫул станцине тытса илнӗ.

ЧЕРНЯХОВ районӗнче пирӗн ҫарсем ҫаплах тӑшман пехотипе танкӗсен пысӑк вӑйӗсемпе хаяррӑн ҫапӑҫнӑ, тӑшман хӗснипе халӑх пурӑнакан темиҫе пункта хӑварнӑ.

Фронтӑн ытти участокӗсенче разведка тунӑ тата тӑшмана хирӗҫ артиллерипе миномётсенчен персе тӑнӑ.

Декабрӗн 6-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем мӗнпур фронтсенче нимӗҫсен 128 танкне персе ҫӗмӗрнӗ е пӗтерсе тӑкнӑ. Сывлӑшри ҫапӑҫусенче тата ҫӳлелле перекен артиллери тӑшманӑн 29 самолетне персе ӳкернӗ.

ДЕКАБРӖН 8-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐЙ СВОДКА

Декабрӗн 8-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем КРЕМЕНЧУГ хулинчен хӗвеланӑҫнерехре тата кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехре, тӑшман хирӗҫ тӑнине ҫӗнтере-ҫӗнтере тата унӑн контратакисене сире-сире ярса, ҫаплах наступлени туса пынӑ, Кировоград облаҫӗнчи ЕЛИЗАВЕТГРАДКА тата НОВАЯ ПРАГА ятлӑ район центрӗсене тытса илнӗ, ҫавӑн пекех тата СЕМИГОРЬЕ, ОНОВО, МИХАЙЛОВКА, СВЕТЛОПОЛЬЕ, ГРИГОРЬЕВКА ятлӑ ялсене тата ШАРОВКА чугун ҫул станцине йышӑнса илнӗ. Ҫапла вара ЗНАМЕНКАПА НИКОЛАЕВ хушшинчи тата ЗНАМЕНКАПА КРИВОЙ РОГ хушшинчи чугун ҫулсене пирӗн ҫарсем татнӑ.

ДНЕПР шывӗн кукринче, ДНЕПРОПЕТРОВСК хулинчен кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехре, пирӗн ҫарсем тӑшманпа тӗллӗн-тӗллӗн ҫапӑҫнӑ, тӑшмантан вӑйлӑ ҫирӗплетнӗ темиҫе пункта тытса илнӗ.

ЧЕРНЯХОВ хулинчен ҫурҫӗр-хӗвелтухӑҫнерехри районра пирӗн ҫарсем тӑшманпа хаяррӑн ҫапӑҫнӑ, ҫапӑҫусем хыҫҫӑн халӑх пурӑнакан темиҫе пункта хӑварнӑ.

Фронтӑн ытти участокӗсенче разведка тунӑ тата тӑшмана хирӗҫ артиллерипе миномётсенчен персе тӑнӑ.

Декабрӗн 7-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем мӗнпур фронтсенче нимӗҫсен 96 танкне персе ҫӗмӗрнӗ е пӗтерсе тӑкнӑ, вӑл шутран 84 танкне Черняхов хулинчен ҫурҫӗр-хӗвелтухӑҫнерехри районра пӗтерсе тӑкнӑ. Сывлӑшри ҫапӑҫусенче тата ҫӳлелле перекен артиллери тӑшманӑн 19 самолетне персе ӳкернӗ.

(Вӗҫӗ 2-мӗш страницӑра)

Совет Информаци Бюровĕнчен

ДЕКАБРĔН 8-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКĂН ВĔÇĔ

Кременчуг хулинчен хĕвеланăçнерехре тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем çапăçса наступлени туса пынă. Совет чăçĕсем малалла куçса пынине чарма хăтланса, тăшман пехотипе танкĕсен пысăк вăйĕсем контратакăсене тăваççĕ. Пирĕн çарсем гитлеровецсен контратакисене пурне те ăнăçлă сирсе янă та, тăтăшăн пырса çапса, Кировоград облаçĕнчи Новая Прага ятлă район центрне тытса илнĕ. Çак пысăк хула умĕнчи вырăнсенче тата унăн урамĕсенче тăшман 800 вилли тата ытти пурлăх юлнă. Трофейăсем тытса илнĕ, вĕсен шутĕнче хăй тĕллĕн çўрекен 5 тупă, боеприпас склачĕ, çăкăр-çимĕç 2 склачĕ тата пĕр апат-çимĕç склачĕ. Çентерўсене малалла аталантарса пырса, совет çарĕсем Шаровка ятлă чугун çул станцине тытса илнĕ, çапла вара Знаменкăран Николаевка тата Кривой Рог хулине каякан чугун çула татнă. Пирĕн тепĕр соединени чăçĕсем нимĕçсене Кировоград облаçĕнчи Елизаветградка ятлă район центрĕнчен хĕссе кăларнă. Пĕр участокра тăшман пирĕн малалла тапăнса пыракан çарсене флангран пырса çапма хăтланнă. Пирĕн чăçсем нимĕçсене çурçĕртен тата кăнтăртан çав тери хăвăрт хирĕç пырса çапнă та нимĕçсене хăйсене хĕссе лартнă, вара тăшманăн васкасах каялла чакмалла пулнă. Çав çапăçура гитлеровецсен пĕр батальонне çити вĕлерсе пĕтернĕ, нимĕçсен 12 танкне тата 2 бронемашинне пĕтерсе тăкнă.

Днепр шывĕн кукринче, Днепропетровск хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре, пĕр соединени чăçĕсем тăшманăн вăйлă сирĕнлĕ пунктне тытса илнĕ. Пирĕн боецсем нимĕçсен 600 салтакĕпе офицерне ытла вĕлерсе пĕтернĕ, 7 тупă, 5 миномет тата 20 пулемет пĕтерсе тăкнă. Трофейсем тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур.

Совет летчикĕсем бомбăсем тĕл пересе тăшманăн çар эшелонне, 2 боеприпас склацне сирпĕнтерсе янă тата нимĕçсен çар хатĕрĕсемпе турттарса пыракан 60 автомашинине ытла пĕтерсе тăкнă.

Черняхов хулинчен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре пирĕн çарсем тăшманпа хаярран çапăçнă. Пĕр соединени чăçĕсем кун каçах нимĕçсен умлăхыçлă туса пынă атакисене сире-сире янă. Тăшман çапăçăва хăйĕн пехотипе танкĕсен пысăк вăйĕсене кĕртсе янă. Тăшман, пысăк çухатусем тўссе, пирĕн подразделенисене каялла чакарнă та халăх пурăнакан темиçе пункта тытса илнĕ. Çав участокра кун каçиччен нимĕçсен 2.000 салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă, тăшманăн 66 танкне тата 4 бронемашинине çунтарса янă е персе çĕмĕрнĕ. Тепĕр участокра совет артиллеристчĕсемпе бронебойщикĕсем нимĕçсен 18 танкне, 7 бронетранспортерне тата пехота турттарса пыракан автомашинисене нумай пĕтерсе тăкнă.

Нимĕçсен командованийĕ Ленинград облаçĕнчи вăхăтлăха йышăннă районĕсенчи ялсене çаратма тата пĕтерсе тăкма ятарласа тунă çар чăçĕсем янă. Çав фашистла пускасаткасем ялсене çаратнă хыççăн ялсене çунтарса яраççĕ, мирлĕ çынсене пĕтереççĕ. Халăха çапла çаратса тухнă хыççăн нимĕçсем ялсене çунтарса яраççĕ, совет граждансене Германи каторгине хăваласа каяççĕ. Ленинград облаçĕнчи çапăçакан партизансен темиçе отрячĕ юлашки вăхăтра çав вăрă-хурахсемпе çапăçăвĕсене командирĕсене командованийĕсене хытă çапăçнă. Çав çапăçусенче, туллимар даннăйсем тăрăх, партизансем 1.200 гитлеровецсене ытла вĕлерсе пĕтернĕ. Нимĕçсен фашистла чурасăха хăваласа каякан нумай совет гражданĕсене ирĕке кăларнă.

* * *

Нимĕçсен 82-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 168-мĕш полкăн 2-мĕш батальонĕн тыткăна лекнĕ адъютанчĕ обер-лейтенант Карл Шварц çапла каласа кăтартнă: «Сентябрĕ уйăхĕн юлашки кунĕсем тĕлне пирĕн дивизи 168-мĕшпе 158-мĕш полкĕсенчен тăнă. Пĕр полкĕнче 2 батальон, теприйĕнче пĕр батальончĕ. Ку дивизие тата пĕр батальон хушрĕç. Вăл юхăнса çĕмĕрсе тăкнă соединенисен юлашкийĕсенчен тунăччĕ. Пĕр ял патĕнчи хаяр çапăçусенче 168-мĕш полка вырăссем çĕмĕрсе тăкрĕç. 2-мĕш батальонра 150 салтак юлчĕ, 1-мĕш батальонĕнче мĕнпурĕ те 8 çын кăна тăрса юлчĕ. Теприне кун иртсен, полка çĕнĕ вăй хушса пачĕç, анчах та хушса панă салтаксем вăрçă çине вĕренменскерсем пулчĕç. Дивизие çапăçма юрăхсăр тесе шутласа, çывăхри тыла илсе кайма шутларĕç. Анчах та эпир тылра нумай тăраймарăмăр. Вырăссем сасартăк çав тери хăвăрт малалла куçрĕç те пире çавăрса илессе хăратма пуçларĕç. Полк штабĕпе батальонсен хушшинчи çыхăну пĕтсе ларчĕ. Тупă пĕтри штаб машинине пырса тиврĕ те ăна пĕтерсе тăкрĕ. 2-мĕш батальон командирĕ йывăрăн аманчĕ. Салтаксем тарса пĕтрĕç.

Каç енне эпĕ 25 çын пухма пултартăм,—мĕнпур батальонран çавсем кăна тăрса юлнăччĕ. Каялла чакнă чухне çул çинче манăн тата 18 салтак пĕтрĕ, çав вăхăтрах пире вырăссем хăваласа çитрĕç».

* * *

Нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем мирлĕ совет граждансене тискеррĕн асаплантарни çинчен çĕнĕ хыпарсем илнĕ. Барановичи облаçĕнчи Лесная станцийĕнче нимĕçсем Германи каторгине вăйпа хăваласа каякан совет гражданĕсем нумай пулнă. Ноябрь уйăхĕн юлашки кунĕсенче тухтăрсем пăхса тухнă хыççăн гитлеровецсем ĕçлеме пултарайман тата чирленĕ 900 çынна ытла суйласа илнĕ те çавăнтах персе пăрахнă.

Ўкерчĕк çинче: старши лейтенант **М. И. Игнатьев.** Вăл вăрçа кайиччен Вăрнарта райçутĕç пайĕн инспекторĕ пулса ĕçленĕ. Отечественнăй аслă вăрçă фронтĕнче хастарлăн çапăçнăшăн ăна «За боевые заслуги» медальпе наградăланă.

Пурте йĕлтĕрçĕсен ăмăртăвне хутшăнар!

ВЛКСМ Центральнăй Комитечĕ йышăннă тăрăх, çак хĕлре колхоз çамрăкĕсен Пĕтĕм Союзри йĕлтĕрлĕ ăмăртăвĕ пулса иртмелле. Унăн тĕллевĕ ĕççыннисене йĕлтĕрпе çўреме тата йĕлтĕр çинче пăшал пеме вĕрентесси тата лайăх йĕлтĕрçĕсене палăртасси пулса тăрать.

Колхоз çамрăкĕсен йĕлтĕрлĕ ăмăртăвĕ малтан колхозсенче, унтан районсенче пулса иртмелле. Мала тухнă командăсем республикăри ăмăртăва, республикăра мала тухнă командăсем — Пĕтĕм Союзри (кустсенчи) ăмăртăва хутшăнаççĕ.

Ăмăрту колхозсенче — 1944 çулхи январĕн 10-мĕшĕччен, районсенче — 1944 çулхи январĕн 20-мĕшĕччен, республикăра—1944 çулхи февралĕн 5-мĕшĕччен, Пĕтĕм Союзра — 1944 çулхи февралĕн 15—20-мĕшĕччен пырать.

Пирĕн республика 8-мĕш куста (Хусан хули) кĕрет. Унта 8 облаçри тата республикăсенчи командăсем пулаççĕ.

Колхозсемпе районсенчи ăмăртăвăн программине çаксем кĕреççĕ: йĕлтĕр çинче вăрçă хатĕрĕсемпе чупасси (хĕрарăмсен 3 километр, арçынсен 5 километр чупмалла). Услови: дистанцин юлашки километрĕнче, йĕлтĕр йĕрринчен сулахай еннелле, арçынсен 25 метра, хĕрарăмсен 18 метра граната ывăтмалла. Финиш патне çитиччен 100 метрта арçынсен 30 метр хушши, хĕрарăмсен 20 метр хушши хырăмпа шуса тухмалла. Вĕсем çинче противогаз 3 гранатăллă сумка пулмалла.

Хăвăрт чупас енĕпе арçынсен 10 километр, хĕрарăмсен 8 километр чупмалла.

Республикăри, çавăн пекех тата Пĕтĕм Союзри (кустри) ăмăртăвăн программинче — вăрçă хатĕрĕсемпе чупмалли эстафета (арçынсен 10—20 километр хушши, хĕрарăмсен 3—10 километр хушши).

Йĕлтĕрçĕсен ăмăртăвне кашни колхоз çамрăкĕ хутшăнма тивĕçлĕ. Мала тухакансенчен 3 арçын тата 3 хĕрарăм суйласа илсе районри ăмăртăва хутшăнма пĕр команда тăваççĕ.

Йĕлтĕрçĕсен ăмăртăвне 15 çулхи çамрăксенчен пуçласа, медицина тĕрĕслевĕнче пулнисене пурне те хутшăнтараççĕ. Пĕччен чупса мала тухассишĕн пулакан ăмăртăва (арçынсем—20 километр, хĕрарăмсем — 10 километр хушши) 16 çултан çамрăк мар физкультурниксемпе физкультурницăсене хутшăнтараççĕ.

Йĕлтĕрлĕ ăмăртăва организованно ирттернĕшĕн çав ĕçе массăна анлăн явăçтарнăшăн, çавăн пекех тата халăха йĕлтĕрпе çўреме вĕрентес тĕлĕшпе тимлĕн ĕçленĕшĕн премилеме ВЛКСМ Центральнăй Комитечĕ тата физкультурăпа спорт ĕçĕсен Пĕтĕм Союзри Комитечĕ кĕпесемпе костюмсем, ята çырнă сехетсем, йĕлтĕрçĕсен костюмĕсем, урана тăхăнмалли япаласем, дипломсемпе свидетельствăсем уйăрса хунă.

ВЛКСМ райкомĕсемпе комсомолăн пуçламĕш организацийĕсен задачи—çак ăмăртăва тимлĕн хатĕрленсе, унта колхоз çамрăкĕсене анлăн хутшăнтарасси.

Г. ПЕТРУХИН

ВЛКСМ Обкомĕн çар ĕç енĕпе ĕçлекен секретарĕ.

Выигрышсен тиражĕ

Декабрĕн 6-мĕшĕнче Мускавра Виççĕмĕш пятилетка заемĕн (виççĕмĕш çулхи кăларăмĕн) 12-мĕш вылявĕ пулса иртнĕ.

Выляври 134.743.200 тенкĕлĕх 846.400 выляв пулнă.

3.000 тенкĕлĕх выляв заемăн 92 разрядĕнчи 89.683-мĕш серин 33-мĕш номерлĕ облигацийĕ çине ўкнĕ. (ТАСС).

„Лиза Короткова" спектаклĕ сўтсе-явни

Декабрĕн 7-мĕшĕнче Шупашкарти Пионер çуртĕнче Чăвашсен Государство Академи театрĕн артисчĕсемпе чăваш писателĕсем тата журналисчĕсем тĕл пулса «Лиза Короткова» спектакле сўтсе-яврĕç. Тухса калаçакансем (Лихтенштейн, Шавлы, К. Сергеев, Ф. Уяр, Мордкович, Чăваш АССР-ĕн тава тивĕçлĕ артисчĕ И. Молодов, Никитин тата ытти юлташсем те) пьесăн тата спектаклĕн паха енĕсене палăртнипе пĕрлех çитменлĕхсем çинче те тĕплĕн чарăнса тăчĕç. Автор шухăшĕпе (пьесăна искусствăсен тава тивĕçлĕ деятелĕ Н. С. Айзман çырнă, спектакле лартаканĕ Л. Н. Родионов) Лиза Короткова вăрçă вăхăтĕнче колхозра ырми-канми ĕçлекен колхоз председателĕ, массăсене ĕçре хавхалантарса пыракан çын, çивĕч организатор пулмалла. Анчах пьесăра тата пуринчен ытла—спектакльре Лиза ролĕ питĕ шупка пулса тухнă. Вăл пĕр сăлтавсăрах туха-туха кĕнисĕр, ятлаçнисĕр, чупса çўренисĕр пуçне пьесăра нимех те тумасть темелле. Унăн, пурнăçри çыннăнни пек, чĕрĕ сăмахсем, чĕрĕ сăнлăх çук. Лиза Короткова (артистка А. Долгова)—плакат çинчи сăмахсене калакан схема кăна.

Спектакле пĕтĕмĕшпе илсен, унта ертсе пыракан шухăш çукки уççăнах сисĕнет. Интригăсем чăмăртанса пĕр тĕп ĕç, тĕп идея тавра пĕтĕçес вырăнне сапаланса каяççĕ. Çавна пула вара Сахрунпа арăмĕ хушшинчи пек пулăшуллă интригăсемех пĕтĕм спектакле хупласа хураççĕ.

Пьесăра колхозниксем кив йăласене пăрахса çĕнĕлле пурăнма, вăрçă вăхăтĕнчи пек ĕçлеме тытăннине, вĕсен ăс-тăнĕсем улшăннине автор пур çĕрте те тенĕ пек кăтартса мар, каласа парать.

Тухса калаçакансем Н. С. Айзман хăйĕн пьесине çырнă чух куракансене йăлăхтарса çитерне приемсемпе, çиелтен пăхма эффектлă пек туйăнакан меслетсемпе усă курнине те асăрхаттарчĕç. Сăмахран, занавес уçăличченех барабан кĕрлеме тытăнать, туй сикет, ўсĕр çынсем сăрапрех йăтса тайкаланса çўреççĕ т. ыт. те. Чĕлхе тĕлĕшĕнчен те пьесăра çитменлĕхсем пур.

Спектакле режиссер трактовки те чылай пăснă. Выляканссем пурте тенĕ пек темшĕн питĕ васкаса çўреççĕ, хăйсен вăйне хăйсем шанман пек чупкаланаççĕ. Тухса калçакансем çавнашкалах Якура ĕлĕкхи кулаксем пек туса кăтартнине те тĕрĕс мар терĕç.

Артистсенчен пуринчен ытла чăваш халăх артисчĕ Б. А. Алексеев юлташ лайăх вылять. Вăл спектакльрен спектакле образа тарăнлатмалли çĕнĕ штрихсем, çĕнĕ сăнлăхсем тупать. «Лиза Коротковăра» вылякан ытти артистсенчен республикăн тава тивĕçлĕ артисчĕсене Угталкина (Якур) тата Петровăна (Пăрттуçи) палăртмалла.

Пĕтĕмĕшпе илсен, «Лиза Короткова» спектакль любительсем лартакан спектакльсенчен нимĕнле те уйăрăлса тăмасть.

Авторпа режиссер сўтсе-явнă чух кăтартнă çитменлĕхсене пĕтерме пулчĕç.

Ют çĕршывсенче

Рузвельт, Черчилль тата Иненю Каирта тĕл пулса калаçни

ЛОНДОН, декабрĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Каирта декабрĕн 7-мĕшĕнче çакăн пек коммюнике пичетлесе кăларнă тесе пĕлтерет:

«Америкăри Пĕрлешўллĕ Штатсен президенчĕ Рузвельт, Турци республикин президенчĕ Исмет-Иненю тата Великобританин премьер-министрĕ Черчилль Каирта декабрĕн 4-мĕшĕнче, 5-мĕшĕнче тата 6-мĕшĕнче тĕл пулса калаçнă. Великобританин ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Иден, Турцин ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Мэнеменджиоглу тата Гарри Гопкинс çав калаçусене хутшăннă. Америкăри Пĕрлешўллĕ Штатсен, Великобританин тата Совет Союзĕн правительствисем чунтан чĕннине йышăнса, Турци государствин пуçлăхĕ Каирта пыни Англипе Турцие пĕрлештерсе тăракан союзăн вăйне, çавăн пекех тата Турци халăхĕпе Америкăри Пĕрлешўллĕ Штатсен тата Совет Союзĕн халăхĕсем питĕ туслă пураннине уççăн кăтартса парать. Президент Рузвельт, президент Иненю тата премьер-министр Черчилль политикăллă пĕтĕм лару-тăрăва пăхса тухрĕç тата вĕсем, виçĕ çĕршывăн пĕтĕмĕшле интересĕсемпе кашни çĕршывăн хăйĕн уйрăм интересĕсене асра тытса, мĕнле политика тытса пырассине те пур енчен те пăхса тухрĕç. Çав мĕнпур ыйтусене вĕсем пĕр-пĕрне ăнланса тата хисеплесе пăхса тухни Америкăри Пĕрлешўллĕ Штатсем, Турци ата Англи пĕр-пĕринпе таччăн пĕрлешсе тăнине палăртрĕ, пĕтĕм тĕнчери лару-тăру çине мĕнле пăхнине кăтартрĕ. Çавна пула Каирти калаçусем питех те ăнăçлăн пулса иртрĕç, малашне тăвата çĕршыв пĕр-пĕринпе хутшăнса тăрас ĕçшĕн питĕ усăллă пулчĕç. Каирти конференци Америкăпа Англин аслă демократийĕсен интересĕсемпе шухăшĕсем Совет Союзĕн интересĕсемпе тата шухăшĕсемпе пĕр пекех пулнине, çавăн пекех тата çав виçĕ çĕршывпа Турци хушшинчи яланхи туслăха тата те пĕр хут палăртса хăварчĕ».

Англи хаçачĕсем союзлă виçĕ державăн руководителĕсен Тегеранри конференцийĕ çинчен

ЛОНДОН, декабрĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Англири хаçатсемпе радио виçĕ державăн декларацийĕ çинчен нумай çыраççĕ, нумай калаçаççĕ. Хаçатсем Тегеранри калаçусем питĕ кăмăллă обстановкăра пулса иртнине палăртаççĕ. Хаçатсен пĕррремĕш страницинче союзлă виçĕ державăн руководителĕсен сăнĕсене пичетленĕ.

«Таймс» хаçат çапла çырать: «Декларацин пуçламĕшĕнче унăн авторĕсене—Пĕрлешўллĕ Штатсен президентне, Великобританин премьер-министрне тата Совет Союзĕн премьерне—кăтартса тухнă. Çав декларации вăл хальхи вăхăтра мĕн чухлĕ авторитетлă пулма пултарнă таранах авторитетлă пулса тăрать. Вăл питĕ анлă... Виçĕ пуçлăх «шухăш-кăмăлсемпе тĕллевсем тĕлĕшпе чăн-чăн туссем пулса уйăрăлнă». Хальхи йывăр ĕмĕрхи курайманлăхпа тискерлĕхсенчен хăтăлнă тĕнче хăçан та пулсан çав руководительсем тĕл пулнине аса илĕ, ăна вăл этемлĕхе йĕркене кĕртес тĕлĕшпе ĕçленĕ вăрăм вăхăтăн пĕр тапхăрĕ пулса тăрать тесе шутлĕ».

«Тегеранра йышăннă декларации хыççăн çак вăрçă урăхла пулса тăрать,—тесе çырать «Дейли экспресс» хаçат,—вăл çăмăлтарах пулмасть, анчах та унăн тĕллевĕсем уçăмлăрах пулаççĕ. Вăрçă ĕнтĕ этемлĕхе пĕтĕмпех халран яриччченех, вĕçĕмсĕрех тăсăлса пымĕ. Декларацин чĕлхи унăн историллĕ характерĕпе килĕшсе тăрать. Унта час-часах Черчиллĕн хăйне уйрăм сăмахĕсем тĕл пулаççĕ. Анчах хăшпĕр пуплевсенче акăлчан чĕлхипе каланă чухне те вырăссен сăмах çаврăнăшĕсем палăраççĕ. Вĕсем Сталин Российăри халăха çав тери паттăр ĕçсем тума чĕннĕ сасса палăртса тăраççĕ. Çав декларацире тата Рузвельтăн чĕлхипе пысăк ăсĕ курăнса тăраççĕ».

Иран пирки йышăннă декларации çинчен хаçат çапла çырать: «Çак декларации вăл пĕчĕк нацисен ĕмĕтне кăтартакан декларации пулса тăрать, çав вăхăтрах вăл пысăк агрессорсем пĕтесси çинчен калакан декларации пулса тăрать».

«Ньюс кроникл» хаçат Тегеранри конференци çинчен çапла калать: «Эпир нимĕçсем пулнă пулассăн, çак документ пире хăратса пăрахнă пулĕччĕ. Унăн сăмахĕсенче палăракан питĕ пысăк шанчăк Германири халăхăн шухăш-кăмăлне нумай улăштарĕ. Союзниксене пĕр-пĕринпе хирĕçтерсе ярса, поражени тўсессинчен хăтăлма нимле шанчăк та çуккине Германия халь пĕлет ĕнтĕ»...

Рейтер агентствин дипломатиллĕ ĕçсем çинчен çыракан сотрудникĕ Ренделл Ню виçĕ державăн декларацийĕ çинчен çапла калать: Тегеранра йышăннă декларации çĕнтерес шанчăк халь çав тери пысăккине кăтартса парать, çакă вăл декларацире тĕп вырăн йышăнса тăрать. Кĕске сăмахсемпе каласа, Германие вĕлермелли приговор йышăннă, ăна Сталин, Рузвельт тата Черчилль алă пуснă. Сталин алă пусни—вăрçă ĕçĕсенче Англипе Америка тăшмана хĕвеланăçĕпе кăнтăр енчен тапăнса Совет Союзне пулăшмалли плансене Сталин пĕтĕмпех ырланине пĕлтерет, вăрçă вăрçас ĕçре аслă виçĕ державăна пĕр-пĕринпе хирĕçтерсе яма нимĕçсем шанса тăнине пĕтĕмпех пĕтерсе лартать.

Лондонри радион политикăллă ĕçсене пăхса тухакан сотрудникĕ çапла каланă: «Тегеранри канашлу тăшмана çĕнтерме тата çĕнĕ тĕнче тума никĕс хывса хăварчĕ. Декларацире çапла каланă: мир тăвас ĕçе тирание курайман пур нацисем те хутшăнма пултараççĕ, тенĕ. Çавăн пек нацисем пĕтĕм тĕнчери халăхсен çемьине кĕнине союзниксем савăнса ырлĕç. Декларации çавăн пек нацисен шутне малтан тăшман пулса, унтан тиранирен хăтăлнă çĕршывсене те, вăрçа хутшăнман çĕршывсене те кĕртет. Çав вăхăтрах ĕлĕкрех тăшман пулнă пĕр çĕршыв та, çавăн пекех тата вăрçа хутшăнман пĕр çĕршыв та, союзлă çĕршыв та, вăл демократипе ирĕклĕхе пусарса лартакан йĕрке тытса тăрать пулсан, çав нацисен шутне кĕреймест.

Тегеранри конференци тĕнче малашне, тăшмана аркатса тăкнă хыççăн, вăрçă пĕтнĕ хыççăн мĕнле пуласси пирки иккĕленнине пĕтĕмпех сапаласа ячĕ. Çав тĕнчере империализм е фашизм тытăнса тăма е çĕнĕрен çуралса тухма пултарайманни халĕ ĕнтĕ питĕ паллă пулса тăчĕ».

Италири вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, декабрĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Çурçĕр Африкăри çарĕсен штабĕ çапла пĕлтерет: Америкăн 5-мĕш армийĕн фронтĕнче союзниксен çарĕсем хăшпĕр секторсенче кăштах малалла куçнă, темиçе паха участока йышăнса илнĕ. Хăшпĕр секторсенче тăшман контратакăсем тунă, тăшманăн контратакисем тĕллĕн-тĕллĕн ăнăçлă пулнă, ытти секторсенче вара тăшмана каялла ывăтса янă.

Англин 8-мĕш армийĕн фронтĕнче, вăйлă çумăрсем çуса тăнă пирки, тусем çинче малалла куçма пулман. Тăшмана пур секторсенче те хĕсеççĕ. Халĕ вăл Ортона-Орсонья Гуардиагреле линийĕнче тытăнса тăрать.

ЛОНДОН, декабрĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе çапла пĕлтереççĕ: акăлчансен 8-мĕш армийĕн фронтĕнче союзниксен çарĕсем тăшман çарĕсемпе пуринчен ытла Моро шывĕ тăрăхĕнчи çыраннсен секторĕнче çапăçнă. Çумăрсем çуса тăнипе халĕ те малалла куçма пулман.

Американецсен 5-мĕш армийĕн чăçĕсем фронтăн центральнăй секторĕнчи тусем çинче тăшманăн хирĕç тăмалли тĕввисене тапатнă. Союзниксен çарĕсем Монтекамино ятлă ту тăррине тытса илнĕ. Ку ту тăрринчен тăшман позицийĕсене асăрхаса тăма майлă. Темиçе ял тытса илнĕ. Хаяр çапăçусем халĕ те пыраççĕ.

ТУРИН ХУЛИНЧЕ НИМĔÇ ГЕНЕРАЛНЕ ВĔЛЕРНĔ

ЛОНДОН, декабрĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: кунта çитнĕ хыпарсем тăрăх, фашизма хирĕç тăракан рабочисем Турин хулинче декабрĕн 3-мĕшĕнче «СС» çарĕсен нимĕç генералне Циммермана вĕлернĕ. Ку хулана Циммермана декабрĕн 1-мĕшĕнче хулара Германие хирĕç пулса пыракан демонстрацисене пусарса лартма янă пулнă.

АКĂЛЧАНСЕН ПОДВОДНĂЙ ЛОДКИСЕН ВАТАÇĔР ТИНĔС ÇИНЧИ ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, декабрĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Акăлчансен тинĕс министерстви çапла пĕлтерет: акăлчансен Ватаçĕр тинĕс бассейнĕнче кĕрешекен подводнăй лодкисем çаплах тăшман суднисемпе çапăçаççĕ. Самос утравĕ патĕнче тата Грецин кăнтăрти çыранĕсем çывăхĕнче тăшманăн вăтам тоннажлă 2 грузовой суднине торпеда ярса путарнă. Эгей тинĕсĕнче темиçе тĕлте тăшманăн 14 пĕчĕк суднине пĕтерсе тăкнă. Вăл суднăсенчен пĕр пайĕ боеприпассем турттарса пынă. Акăлчансен пĕр подводнăй лодки тăшманăн Наксот утравĕ çыранĕнчи склачĕсене пенĕ тата тăшманăн бухтăра тăнă пĕр гидросамолетне шыва путарнă. Çав районрах буксир туртса пынă дока пĕтерсе тăкнă.

ХРОНИКА

СССР Верховный Совет Президиумĕ Алексей Николаевич **Красильников** юлташа ССР Союзĕн Исландири Чрезвычайнăй тата Полномочнăй Посланникĕ пулма уйăрса лартнă.

Ответлă редакторăн заместителĕ А. А. ЭСХЕЛЬ

СССР Наркомтекстилĕн „энерготрансучтекстилĕн" Шупашкарти филиалĕ ШОФЕР ПУЛМА ВĔРЕНТЕКЕН КУРСА вĕренме йышăнать. Ку курсра 3-мĕш класс шофер пулма вĕрентеççĕ тата газогенераторлă автомобильсен шоферĕсене хатĕрлеççĕ.

Курсра вĕреннĕ чухне предприятисенче ĕçлеме те юрать, çавăн пекех тата ниçта та ĕçлемесĕр вĕренме те юрать.

Курсра вĕреннĕшĕн укçа тўлемелле мар.

Ниçта та ĕçлемесĕр вĕренекенсене 3-мĕш класс шофер пулма 2 уйăх хушшинче вĕрентсе кăлараççĕ.

Газогенераторлă автомобильпе çўреме вĕренес текен шоферсене, вĕреннĕ вăхăтра ниçта та ĕçлемесен, 10 кун хушшинче вĕрентсе кăлараççĕ, вĕреннĕ хушăрах производствăра та ĕçлеççĕ пулсан—20 кун хушшинче вĕрентсе кăлараççĕ.

3-мĕш класс шофера вĕренмелли курсра 17 çултан кĕçĕн мар арçынсемпе хĕрарăмсене илеççĕ, пĕлў тĕлĕшпе пуçламĕш шкултан вĕренсе тухнă чухлĕ пелмелле.

Вĕренме 1943-мĕш çулхи декабрĕн 15-мĕшĕнче тытăнаççĕ.

Ыйтса пĕлмелли пулсан, филиал канцелярийĕнче, канхалли кунсемсĕр пуçне кашни кунах 9 сехетрен пуçласа 18 сехет çитиччен ыйтса пĕлме пулать.

Адрес çапла: гор. Чебоксары, ул. Карла Либкнехта, 14.

2—1

ЗАВОДРА ĔÇЛЕМЕ çак специальноçсене пĕлекенсем кирлĕ: экономист, секретарь-машинисткăсем, бухгалтери работникĕсем, кладовщиксем, фотограф, библиотекарь, чертежниксем, копировщиксем.

Чугун çул çинче ĕçлеме çак специальноçсене пĕлекенсем кирлĕ: поезд составителĕсем, сцепщик-стрелочниксем, пострă тăракан дежурнăйсем, вагон осмотрщикĕсем, çулсене юсакан рабочисем.

Тата токарь-фрезеровщиксем, револьверщиксем, слесарьсем, гальваниксем, волочильщиксем, штамповщиксем, строительнăй рабочисем, грузчиксем, прачкăсем подсобнăй рабочисем тата уборщицăсем кирлĕ.

Арçын е хĕрарăм вахтерсем (охранниксем) тата пожарниксем кирлĕ.

Çавăн пекех тата тĕрлĕ специальноçсем тăрах переквалификантсене (15 çул тултарнă е унтан аслăрах ученниксене) илеççĕ.

11 сехетрен пуçласа 15 сехет çитиччен çак адреспа ыйтса пĕлмелле: Чебоксары ул. Карла Маркса, 80, Бюро пропусков.

Вăрман сыхласа усракан тата вăрман лартса ўстерекен Чăваш Управленин ОРС-не çак специальноçсене пĕлекенсем кирлĕ: агроном, инспекторсем, делопроизводитель-машинистка, плановăй сектор начальникĕ, бухгалтерсем, ревизор-инвентаризатор, счетовод-кассир инкассатор.

Адрес çапла: гор. Чебоксары, ул. Урицкого, 36.

2—1

Шăхасан районĕнчи Услантăр ялĕнче ЛАША ÇУХАЛЧĔ. Паллисем çапла: ячĕ „Кот", тĕсĕ — улă хура, 1933-мĕш çулта çуралнă, çўллĕшĕ — 151 см.

Пĕлекенсене çак адреспа пĕлтерме ыйтатăп: Чувашская АССР, Красноармейский район, Кожарский сельсовет, Правлению Старотитьского колхоза „Большевик".

МТС-пе çĕр органĕсен союзĕн обкомне ГЛАВНĂЙ БУХГАЛТЕР, БУХГАЛТЕР-РЕВИЗОР тата МАШИНИСТКА кирлĕ. Главнăй бухгалтерăн ĕç укçи-уйăхне 750 тенкĕ.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, ул. Карла Маркса, дом № 7 (во дворе), 2-ой под'езд. Телефон 2—35.

2—1

ШУПАШКАРТИ КИНОТЕАТР

декабрĕн 6-мĕшĕнчен пуçласа кашни кун сасла илемлĕ

„КОМСОМОЛЬЦЫ"

ятлă çĕнĕ фильм кăтартать. Сеанссем çак вăхăтра пуçланаççĕ: 16, 18, 20 тата 22 сехетре.

Часах

„МЕЧТА"

тлă фильм кăтартма пуçлаççĕ

Шупашкар пристанĕ пур организацисемпе учреждениесене те çакăн çинчен пĕлтерет: 1943-мĕш çулхи декабрĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа 1944-мĕш çулхи февралĕн 1-мĕшне çитиччен Шупашкар пристанĕ 1944 мĕш çулхи навигацие Атăл бассейнинчи пур шывсем тăрăх та грузсем турттарса пама тата буксирпа сулăсем турттарма договорсем тăвать. Грузсене хăвăрт çўрекен пăрахутсемпе те тата хуллен çўрекен пăрахутсемпе те яма юрать.

Шупашкар пристанĕ.

„ЗАГОТЖИВСЫРЬЕН" Чăваш республикинчи конторине çак специальноçсене пĕлекенсем кирлĕ: диспетчер, сăмă тата мамăклă тир чĕртаварĕсем тĕлĕшпе ĕçлекен товароведсем, бухгалтер-ревизор, кассир-инкассатор, статистиксем, машинистка, завхоз, уборщица-рассыльная.

Столовăй пур.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: Чебоксары, ул. Ленина, 31. Телефонсем: 6—42 тата 2—61.

2—1

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0— 67, секретарьпе заместителĕн — 4— 26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин —0—23.

ИТ 1165 Типография №1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. б. 59Х42 п. л Тираж 14.400 экз.